24-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ЯНВАРĔ 15 ЭРНЕКУН 12(6249) №

(Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!)

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР-ĕнчи Пăрачкав районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз

АНДРЕЙ ФЕДОРОВИЧ ПУГАЧЕВ КОЛХОЗНИКЕ

Андрей Федорович, манăн сала ма тата эсир Хĕрлĕ Çарăн бронетанковăй вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн Хĕрлĕ Çар тав тунине йышăнăр.

И. СТАЛИН

Выльăх апачĕсене перекетлĕ тыткалар

Выльăх апачĕсене пухса хатĕрлени, вĕсене тĕрĕс тата перекетлĕн расходлани выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышне çулсерен ÿстерсе пырассишĕн, вĕсен продуктивноçне хăпартассишĕн куллен тăрăшакан колхозсем кăçал та выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрас ĕçе лайăх организацилерĕç. Фермăсем валли шултăра апат та, концентратсем те çителĕклĕ хатĕрлесе хучĕç, утăпа улăма фермăсем патне илсе пырса, ферма заведующийĕсене актсемпе çирĕплетсе пачĕç. Выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçе лайăх организациленĕ колхозсенче выльăх апачĕсене расходламалли нормăсемпе плансем туса çирĕплетнĕ. Выльăхсене тăрантармалли тата пăхса усрамалли правилăсене фермăсенче ĕçлекенсем тĕрĕс пурнăçласа пынине, апата тирпейлĕн тыткаланине колхоз правленийĕсем кулленех тĕрĕслесе тăраççĕ.

Выльăх апатне перекетлĕн тыткаласа усăллă расходлани халĕ уйрăмах питĕ те кирлĕ. Кашни пăт утă, кашни килограмм сĕлĕ выльăхсен хисепне ÿстернĕ çĕре, вĕсен продуктивноçне хăпартнă çĕре каймалла. Выльăх апачĕпе лайăхрах усă курас ыйтăва тĕплĕн пурнăçлама пур мерăсене те йышăнмалла.

Ку тĕлĕшпе Шăхасан районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ильин юлташ) уйрăмах лайăх ĕçлет. Кунта сыснасене ытларах çĕрулмипе тăрантараççĕ. Пăрçа тата чина улăмне типĕтсе авăртнă та çăнăхне пĕçерлĕ çĕрулми çине сапса параççĕ. Çакăн пек туни выльăха сĕлĕ е ытти тырă çитерничен кая мар усă кÿрет, унсăр пуçне вăл выльăх валли уйăрнă тырра ытларах лашасем валли перекетлесе хăварма май парать. Ишлей районĕнчи «Самолет», «Труд», «Клевер», «Пархикасси» тата ытти хăшпĕр колхозсенче те клевер улăмне çăнăх туса çитерес ĕç анлăн сарăлнă. «Самолет» колхоз сыснасене çĕрулмипе тата кăшмана пĕçерсе клевер çăнăхĕпе хутăштарса çитерет. Малта пыракан колхозсен примерĕпе районри ытти колхозсем те клевер улăмĕнчен çăнăх тума тытăннă. Клевер çăнăхне пушмак пăрусемпе ĕнесене те вĕри шывра ислентернĕ улăмпа хутшăнтарса параççĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи 51 колхозра лашасене вĕтĕ туранă улăмпа сĕлĕ хутăштарса çитереççĕ. Çакăн пек туни вăл лашасемшĕн лайăхрах. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли пур тĕрлĕ апатсене те çителĕклĕ таран, хĕллехи вăхăтра çитермеллĕх çеç мар, çуллахи вăхăтра çитермеллĕх те, хатĕрлесе хурассишĕн кĕрешессине, апата перекетлĕн тата усăллăнрах расходлас ĕçе пур колхозсенче те кирлĕ пек хакламаççĕ-ха. Çак ыйту çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман пиркиех хăшпĕр колхозсенче выльăхсен хисепĕ чакса пырать, лашасем, ĕнепăрусем начарланса пыраççĕ. Çакă вăл çавăн пек колхозсен руководителĕсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕç çине тивĕçсĕр пăхни çинчен калать. Руководительсен ответсăрлăхне пула выльăхсем начарланса пынине урăхла ăнлантарса пама та май çук.

Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра сыснасене чĕрĕ, çуса тасатман çĕрулмипе тăрантараççĕ. Ăна та ура айнех пăрахса параççĕ. Ĕнесене çĕрсе пĕтнĕ клевер улăмĕпе тăрантараççĕ. Çавна пула 20 пуç пушмак пăру тата пăруламалли 4 ĕне начарланса кайнă. Фактсем питĕ те киревсĕр, анчах Тăвай районĕнчи руководительсем халиччен те çакăн çине çаврăнса пăхмаççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе кунта кирлĕ пек хакламаççĕ.

Чăваш республикинчи колхозсем 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. 1943 çулта выльăхсен хисепне татах та ÿстересси, вĕсен продуктивноçне хăпартасси колхозсен кулленхи ĕçĕнчи тĕп задача пулса тăрать. Пирĕн колхозсем 1943 çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тумалла. Паллах, çак задачăна колхозсем выльăхсене лайăх пăхса усрасан, выльăх апачĕсене перекетлĕн тыткаласан, фермăсенче çирĕп йĕркелĕх тусан çеç ăнăçлăн пурнăçлама пулать.

Выльăхсем валли шултăра апат хатĕрлес ĕçе республика 1942 çулта пурĕ 92 процент пурнăçланă. Выльăх апачĕсен балансĕпе шутласан, кăçал пирĕн выльăхсене лайăх пăхса усрама апат çителĕклĕ. Кунсăр пуçне сĕтеклĕ апатсем хатĕрлес плана 86,5 процент тултарнă. Силос хывса хăварас плана республика 95,8 процент пурнăçларĕ.

Çапла, пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса усрама кăçал пирĕн колхозсенче апат çителĕклĕ. Выльăх апатне фермăсене çирĕплетсе парса перекетлĕн расходлани çеç кирлĕ. Колхоз председателĕсен, çĕрĕç пайĕсен, çавăн пекех тата партипе советăн вырăнти органĕсен çак ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Выльăх апачĕсене фермăсем патне турттарас ĕçе халех вĕçлес пулать, вĕсене перекетлĕн расходлас пулать.

Çураки çывхарса килет. Çуркуннехи акана ăнăçлăн туса иртерессисе—лашасем çăва мăнтăр, вăйлă тухнинчен нумай килет. Кашни ĕçлекен лаша кăçал çуркунне мăнтăр пулмалла. Çакăн пек пултăр тесен, лашасене пăхса усрассине лайăхлатмалла. Кашни килограмм апата шутра тытса, лашасене куллен çителĕклĕ апат памалла. Кунсăр пуçне, кашни колхозăн халех çураки вăхăтне валли фураж уйăрса хумалла. Çураки фончĕ çуркуннехи ĕçсем пуçланиччченех çирĕп сыхласа усрамалла. Ăна кашни лашана, ялхуçалăхĕнчи ĕçлекен вăкăра шута илсе, çителĕклĕ таран уйăрса хумалла. Выльăх апачĕсене расходлас ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Çурçĕр Кавказра, наступлени туса пырса, **Новоселицкое** ятлă район центрне, **Журавское, Китаевское, Саблинское Свободный, Греческое, Канглы, Побегайловское, Орбельяновка, Калаворка, Ново-Благодарное ятлă халăх** пурăнакан пысăк пунктсене **тата Кумагорский** ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Дон шывĕн анатри районĕнче тата **Центральнăй фронтра** пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Январĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, икĕ поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă поселокĕнче пирĕн подразделенисем, пĕр участокра хулан хĕвеланăç хĕррине пырса тухнăскерсем, хăйсен рубежĕсене тĕреклетнĕ тата противникăн йышлă конратакисене сирсе янă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 10 оруди, 43 пулемет, 4 миномет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Пĕр ансăр участокра танксвăй тата пехотнăй чаçсем пухса тăратса, противник совет чаçĕсен тылне кĕрсе кайма хăтланнă. Пирĕн войскăсем гитлеровецсен планĕсене арпаштарса янă, вĕсен пур контратакисене те сирсе янă. Нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ, анчах вĕсен ĕçĕ пĕртте ăнăçман. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, 4 оруди, 20 пулемет тата 24 автомашина пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 5 оруди, 42 пулемет, броневик тата темиçе çăмăл автомашинăпа мотоциклсем пур.

* * *

Центральнăй фронтра Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă нимĕçсен пехотнăй батальонне питĕ хытă пырса çапнă. Гитлеровецсем çине минометсенчен харăссăн персе тăрса вĕсене каялла чакарнă, противникăн 200 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем хаяр çапăçура нимĕçсен 6 танкне çунтарса янă, 8 станковăй пулемет, 3 миномет тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем çапăçса малалла куçса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски часть 500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 10 орудине, автоматлă 4 туппине, 28 пулеметне, 67 автомашинине, 20 пин патронне, боеприпассен 4 складне тата хăвалаaса каякан пĕр ушкăн выльăха тытса илнĕ. 100 сынна ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра противникăн пехоти 14 танк пулăшнипе контратака тунă. Пирĕн танкистсем старши лейтенант Дорожкин ертсе пынипе нимĕçсен танкĕсене 14-шне те пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтрах Квирикашвили капитан ертсе пыракан подразделени противникăн пехотине кĕтмен çĕртен флангран пырса çапнă. Кĕске çапăçу хыççăн нимĕçсем тарнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 100 вилли ытла выртса юлнă.

* *

Украинăри партизансен пĕр ушкăнĕ боевой задачăна пурнăçланă хыççăн хăйĕн базине таврăннă. Гитлеровецсем тăракан ял çумĕпе иртсе пынă чухне совет патриочĕсем кăшкăрнă тата йĕнăшнă сасăсем илтнĕ. Партизансен разведки нимĕçсем мирлĕ çынсене асаплантарнине пĕлнĕ. Совет патриочĕсем карательсене сасартăк атакăланă та тăшманăн 37 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕ красноармеецсен группине фашистла тыткăнран хăтарнă. Вĕсем çавтери начарланса кайнă, шăммисем çеç тăрса юлнă. Гитлерла ирĕксĕрлĕхрен хăтăлнă С. Оденинцов çапла каласа панă: «Эпир Голубая ялĕ патĕнчи лагерьте пурăнтăмăр. Нимĕçсем тыткăна лекнисене выçăпа асаплантаратчĕç. Пĕçернĕ ыраш пăртакшар панă кунсем пирĕнпĕ чи лайăх кунсем шутланатчĕç. Выçăпа тата хĕненипе куллен темиçешер çын виленчĕç. Совет войскисем наступлени тума пуçласан, гитлеровецсем пире продовольствипе боеприпассем тиенĕ лавсене кÿлчĕç те вĕсене турттарчĕç. Ытла та хуллен пыракансене нимĕç ирсĕрĕсем çавăнтах пере-пере вĕлерчĕç. Хĕрлĕ Çар пире вилĕмрен çăлса хăварчĕ».

* * *

Нимĕç командованийĕ çакăн пек пĕлтерÿ сарнă. «Нимĕç войскисем тыткăна илнĕ красноармеецсем нумайĕшĕ 15 çулхи ачасем тата 60 çулхи е унтан та ватăрах старикĕсем», тенĕ. Ялан суйнипе аташса кайнă гитлеровецсем çĕннине урăх нимĕн те туртса кăларайманăç ĕнтĕ. 1942 çулхи çуркуннех нимĕçсен фашистла пур хаçачĕсенче те çакăн пек халлапа пичетленĕччĕ: «Большевиксем çапăçăва 14 çулхи красноармеецсене кĕртсе яраççĕ», тенĕччĕ. Пĕр çула яхăн каярах нимĕçсем каллех çав шарманкăнах вылянттарма тытăннă. Гитлеровецсем çавăн пек аташнине итлекенсен ирĕксĕрех çакăн пек ыйту сиксе тухать: «Хĕрлĕ Çар речĕсенче 15 çулхи ачасем тата ватă супнă старикĕсем çапăçаççĕ пулсассăн, çавăн пек çар вăл нимĕç çарне мĕнле çав тери пысăк поражени тÿстерме пултарнă-ха, мĕнле вăл нимĕçсен фашистла войскисене хĕвеланăçнелле темиçе çĕр километр хăваласа яма, Сталинград районĕнче халăх пурăнакан 2.000 пункта çити ирĕке кăларма, вăйлăн çапăçса Нальчика, Моздока, Прохладныя, Георгиевска, Пятигорска, Минеральные Воды хулине, Кисловодска, Ессентукине тата ытти нумай хуласене тытса илме пултарнă-ха? Гитлеровецсем пĕлтернĕ тăрăх çапла пулса тухать: нимĕç çарĕ халь çав тери начарланса çитнĕ, вăл красноармеец шинельне тăхăннă ачасемпе старикĕсене курсанах каялла чакать, хăйĕн танкĕсене, орудийĕсене, автомашинисене, склачĕсене пăраха-пăраха хăварать. Гитлеровецсем йăлтах аташса кайни, вĕсем хăйсем суйнин жертви пулса тăни паллă мар-и вара? Нимĕç командованийĕ малашне те çавăн пекех суйса пырсан, унăн часах нимĕç войскисем кăкăр ачисемпе çапăçса тунă «çитĕнÿсем» çинчен пĕлтермелле пулать.

Январĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **пирĕн войскăсем Дон** шывĕн **анатри** районĕнче, **Центральнăй** фронтра **тата Çурçĕр Кавказра** малтанхи еннеллех **çапăçса пынă.**

* * *

Сталинградăн завод поселокĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем противника 27 дзотпа блиндажран хĕссе кăларнă. Нимĕçсем темиçе хут контратака тунă, анчах та вĕсене сирсе пăрахнă.

Сталинград районĕнче совет летчикĕсем аэродрома тапăннă та 5 самолета пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне, сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, наступлени туса пынă. Н-ски часть нимĕç пехотин батальонне, танксем хушса парса вăйлатнăскере, аркатса тăкнă. 400 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 6 танк, тата 3 оруди пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем вăйлăн пырса çапса противникăн оборонине татнă та, малалла кайса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă. Великие Луки хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра противникăн пехотипе танкĕсен контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла тата çунса кайнă 8 танкĕ выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери нимĕçсен пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Противникăн вуншар дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн танкисчĕсем хаяр çапăçура противникăн пехотнăй чаçне çапса аркатнă: 19 оруди, 53 автомашина, 3 трактор, запаслă чаçсемпе боеприпассен склачĕсене тытса илнĕ. Тыткăна лекнĕ совет граждăнĕсемпе красноармеецсен пысăк ушкăнне, концентрациллĕ лагерьте пурăннăскерсене, фашистла тыткăнран хăтарнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă йышлă автомашинисемпе пехотине сапаласа янă.

* * *

Барановичи облаçĕнче кĕрешекен партизансен группи пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 5 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 5 паровоз, 8 платформа, салтаксем ларса пынă 25 вагон тата боеприпассемпе техника тиенĕ 39 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Калмык АССР-ĕн столицинче—Элиста хулинче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Элистăна тытса илсен темиçе кунтан хулана гестаповецсен банди пырса кĕнĕ те мирлĕ совет граждăнĕсене тискеррĕн тыткалама тытăннă. Бандитсем Калмык АССР-ĕн тава тивĕçлĕ врачне Колесникова, рабочисемпе служащисене Клымова, Касева, Рыбалова, Лиджиева, Айвашева, Маслова, Ходжурова, Чибинова, Убушаева, Федорова тата ыттисене те арестленĕ. Арестленисене нимĕçсем тискеррĕн асаплантарнă. Колесников врача гитлерла бандитсем хулăпа 50 хут çапнă, унтан çапта-çарамасланттарнă та сивĕ подвала пăрахнă. Тепĕр кунне ăна машина çине лартса хула хыçне илсе тухнă та унта персе вĕлернĕ. Фашистла ирсĕрсем çавăн пекех тата врача—педиатра Анна Драновăна, Потребсоюз бухгалтерне Виноградова, атă çĕлекене Иван Василенкона тата ытти нумай çынна персе вĕлернĕ. Нимĕç чунилленĕсемпе юнĕçенĕсем çынсене çĕре чĕрĕллех вара-вара хунă. Туллимарданнăйсем тăрăх, гитлеровецсем хулара мирлĕ пурăнакан 800 çынна ытла вĕлернĕ. Нимĕç захватчикĕсем хулари çынсемпе çывăхри ялсенчи çынсенчен продовольствие, выльăх-чĕрлĕхе тата çынсен хăйсен япалисене илсе кайнă. Вĕсем культура учрежденийĕсене варалана, педагогически институтпа çутĕç суртĕнче лаша вити туса хунă. Совет правительстви хулара предприятисем, обществăллă питех те лайăх çуртсем, клубсем, учебнăй заведенисем, шкулсем, больницăсем туса лартрĕ. Нимĕçсем каялла чакас умĕн 2 кун маларах Калмык республикин столицине çĕмĕрсе тăкма пуçланă. Вĕсем правительство суртне, Наркомземпа Наркомфин сурчĕсене, электростанцине, хлебопекарньăна, водопровода, Пичет çуртне, почтăпа телеграфа, больницăсене, ача çуратмалли сурта, 3 столовăя тата обществăллă çуртсемпе пурнăмалли ытти çуртсене ишĕлтерсе антарнă е çунтарса янă. Калмык халăхĕ çакна çирĕп шанса тăрать: фашистла ирсĕрсемпе пусмăрçăсене вĕсем тунă мĕншур преступленисемшĕн ответ тыттарас вăхăт инçе мар ĕнтĕ».

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

РСФСР-ти ĕççынни депутачĕсен край, область, округ, район, хула, ял тата поселок совечĕсене суйлассине тепĕр срока хăварасси çинчен

РСФСР-ти ĕççынни депутачĕсен край, область, хула, район, ял тата поселок совечĕсене суйлассине 1943-мĕш çулхи декабрьчен хăварас тата асăннă советсен полномочийĕсене çав вăхăтчен тăсас.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **А. БАДАЕВ.**

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **П. БАХМУРОВ.**

Мускав, 1943 çулхи январĕн 13-мĕшĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш республикинчи финорганĕсен 1942 çулхи IV мĕш кварталти социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче финорганĕсен иртнĕ çулти тăваттăмĕш кварталти социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă.

1942 çулти IV-мĕш квартал итогĕсем тăрăх, Чăваш республикинчи финорганĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче **Сĕнтĕрвăрри** районĕнчи финанс отделĕ (заведующийĕ Анкудинов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ) мала тухнă тесе йышăннă, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи финанс отделне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата 12 пин тенкĕ преми пама йышăннă.

1942 çулхи тăваттăмĕш квартал итогĕсем тăрăх, Чăваш республикинчи финорганĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче **иккĕмĕш вырăна Вăрмар** районĕнчи финанс отделĕ (заведующийĕ Яковлев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Биктимиров юлташ) йышăннă. Чăваш АССР Совнаркомĕ Вăрмар райфинотделне иккĕмĕш премя — 8 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

1942 çулти тăваттăмĕш квартал итогĕсем тăрăх, Чăваш АССР-чи финорганĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче **виççĕмĕш вырăна Елчĕк** районĕнчи финанс отделĕ (заведующийĕ Тимофеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) йышăннă. Совнарком Елчĕк райфинотделне виççĕмĕш премя — 5 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Совнарком çавăн пекех тата 1942 çулхи тăваттăмĕш кварталта доходсен планне тултарас тĕлĕшпе Çĕрпÿ, Шăхасан, Етĕрне, Шупашкар райфинотделĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Кунсăр пуçне, Совнарком иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта налог пухас тата ытти доходсем енĕпе (перекет кассине укçа хывасси, харпăрхăй ирĕкĕпе страховани тăвасси) Калинински, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Первомайски, Комсомольски тата Чкаловски райфинотделĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Самолетсен „Комсомолец Чувашии“ эскадрильине тума

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 14-мĕшĕ. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума районра 90.000 тенкĕ укçа пухнă. Комбинатри комсомолецсемпе çамрăксем çак ĕç валли 26.000 тенкĕ, «Ударник» колхоз çамрăкĕсем — 16.000 тенкĕ, Чăвашторгăн Çĕмĕрле отделĕнчи работникĕсем— 15.230 тенкĕ хывнă. Комсомолăн çав отделенири пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Маленкова юлташ 300 тенкĕ, бухгалтер Логуновпа работник Пушев юлташсем 700-шер тенкĕ, Ивановăпа Арзамасцева коммунисткăсем 500-шер тенкĕ панă.

* * *

ВĂРМАР, январĕн 14-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа хывас ĕçре «Маяк» колхозри çамрăксем пример кăтартаççĕ. Вĕсем çак ĕç валли 75.000 тенкĕ пухнă. Комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Т. Табакова юлташ 10.000 тенкĕ, колхоз председателĕ Турдушов юлташ 4.000 тенкĕ панă.

СМИРНОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

ИШЛЕЙ, январĕн 14-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Совет войскисен фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă хываççĕ. Январĕн 13-мĕшĕ тĕлне пурĕ 3.570 центнер тырă хывнă. Вăл шутран «Броневик» колхоз 78 центнер, «Красный плуг» — 75 центнер, «Тимĕр сырма» — 69 центнер тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 67 центнер па-

З. М.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илер

Ăмăртăва хутшăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 14-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсенче Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ завод коллективĕн чĕнĕвне сÿтсе-яваççĕ. Предприятисемпе артельсенчи работниксем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме пулчĕç.

Кузнецов юлташ директор пулса ертсе пыракан заводра ĕнер рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Вĕсем январьпе февраль уйăхĕсенчи производство программине 110 процент тултарма пулчĕç. Çавăн пек татăклă обязательствăсем заводри бригадăсемпе уйрăм рабочисем те илчĕç.

— Декабрьти программăна эпир 132 процент тултартăмăр. Анчах ăна çителĕклĕ теме çук-ха. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, эпир татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума пулатпăр: Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине уйăхри программăна ытлашшипех тултарнипе, отлично пахалăхлă продукци туса кăларнипе кĕтсе илме сăмах паратпăр,—терĕç рабочисем митингра.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва «Труженик» завод коллективĕ те хутшăнчĕ. Коллектив февраль уйăхĕнчи производство планне 23 кун хушшинче тултарма, ĕç тухăçлăхне 20 процент ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне 1,5 процент чакарма тата чĕртавара 10 процент перекетлеме пулчĕ. «Труженик» завод коллективĕ «Лесоруб» промартель коллективне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

Х. ЛИСИН.

172-мĕш номерлĕ завод коллективĕн сĕнĕвне йышăнса

Шупашкарти 10-мĕш номерлĕ пекарньăра ĕçлекенсем, Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ завод коллективĕн чĕнĕвне сÿтсе-явса, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Пекарня коллективĕ çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

Январьпе февраль уйăхĕсенчи ĕç планĕсене 110-шер процент тултармалла:

рабочисемпе работницăсен ĕç тухăçлăхне 3 процент ÿстермелле;

çăкăр чашкисене сĕрмелли çăва 10 процент, вутта уйăхсерен 20-шер кубометр перекетлемелле.

Кусемсĕр пуçне, пекарньăри рабочисемпе работницăсем ĕç пахалăхне лайăхлатас, цехсенче тасалăхпа йĕркелĕх кÿрес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене те палăртнă.

Артельсене ертсе пырассине вăйлатмалла

СĔНТĔР, январĕн 14-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсем иртнĕ çулхи хуçалăх ĕçĕсене начар вĕçлерĕç. Вĕсем 1942 çулта продукци туса кăлармалли плана 76 процент, вăл шутран куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 65 процент çеç тултарчĕç. Иртнĕ çулта уйрăмах Кăпасри «Дуб» тата Матикассинчи «Кожевник» артельсем начар ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен çулталăкри производство планĕсене çурри ытларах анчах тултарчĕç.

Районри промкомбинатпа артельсем çапла начар ĕçлени вĕсене партипе совет организацийĕсем çителĕксĕр ертсе пынинчен, куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçри çитменлĕхсене сирме пулăшманнинчен килет. Предприятисемпе артельсен руководителĕсем хăйсем те производствăна вăрçă вăхăтĕнчи пек йĕркелеймен, куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçре пуçарулăхпа тавçăрулăх кăтартмаççĕ, вырăнти чĕртаварсемпе туллин усă курмаççĕ.

Районри предприятисемпе артельсем умĕнче çак çулта татах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Партипе совет организацийĕсем енчен вырăнти промышленноçа ертсе пырассине вăйлатса, предприятисемпе артельсем иртнĕ çулта çĕршыв умĕнче парăма кĕнине пĕтермелле, çак çулти производствăллă плансене уйăхсерен тултарса пырассишĕн кĕрешмелле.

А. СОЛОВЬЕВ.

Государство умĕнчи парăма халех парса татмалла

Красноармейски район государствăна тырă хатĕрлесе памалли 1942 çулхи плана халĕ те тултарман. Ку çес те мар, государство умĕнчи парăмсене хăвăртрах парса татас ĕçе хăшпĕр ялсовет исполкомĕсем пачах ертсе пымаççĕ. Государствăна 1942 çулхи обязательствăсем тăрăх тырă парас ĕç Именово, Мăн Шетмĕ, Мартынкино ялсоветĕсенчи колхозсенче уйрăмах япăх пырать. Ку ялсовет исполкомĕсем çак ĕçе хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе колхозсене кирлĕ пек ертсе пымаççĕ, ĕçе лайăхлатса ярас тĕлĕшпе вĕсем нимĕнле мерăсем те йышăнман. «Коминтерн» колхоз паянхи куна государствăна 620 центнер тырă парса татман çавăн пекех «Красная Шатьма» колхоз 314 центнер парса татман.

Государство умĕнчи парăмсене хăвăртрах парса татма ку колхозсенче те пур майсем те пур, анчах ку колхозсен председателĕсем Григорьев, Семенов, Ильин юлташсем ĕçе япăх ертсе пыраççĕ, хăйсем япăх ĕçленипе вĕсем пĕтĕм района каялла туртаççĕ. Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне районра пурĕ 15 колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татман, çапла 1942 çулта государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана район 88 процент çеç тултарнă.

Мĕншĕн-ха Красноармейски районри хăшпĕр колхозсенче государствăна тырă парас ĕçре халĕ те татăклă улшăну çук? Мĕншĕн тесен районри çĕрĕç органĕпе МТС политотделĕ юлашки вăхăтра çак ĕçпе тĕплĕн интересленме пăрахрĕç. Вĕсен пуçлăхĕ ĕçе вĕçне çити чыслăн туса çитерессишĕн тăрăшни курăнмасть. Акă тĕслĕх: çулте асăннă колхозсен тата «Большевик», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Коммунар» колхозсен авăн çапмалли халĕ те чылай пур. Çапла пулсан та çак ĕçе вĕсем питех те сӳрĕккĕн туса пыраççĕ. Çĕрĕç органĕнче ĕçлекенсем те, МТС политотделĕнче ĕçлекенсем те ку колхозсене ĕçе йĕркелеме пулăшман. Карайри «Большевик» колхоза МТС молотилка памалла пулнă, колхоз председателĕ çав молотилкăна кĕтсе авăн çапас ĕçе организацилемен. Çавăнпа колхозăн çапмалли тырă тата 70 гектар ытла. Нумай кĕтнĕ молотилка колхоза çитнĕ, анчах вăл халь питех те япăх ĕçлет.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра трактор вăйĕпе ĕçлекен молотилка уйăх сурă хушшинче те 25 тонна тырă çеç çапнă. МТС механикĕсем молотилкăсем ĕçленĕ колхозсене туха та пăхмаççĕ, вĕсем районри колхозсенче хăвăртрах авăн çапса пĕтерессипе интересленмеççĕ.

Государство умĕнче парăмлă пулса тăни вăл халь питех те киревсĕр ĕç пулса тăрать. Пĕтĕм ĕçхалăхĕ халь отечественнăй вăрçă фронтĕсенче Хĕрлĕ Çар туса пыракан хăватлă наступление малалла вăйлăн аталантарса пыма май туса парассишĕн пур енлĕн тăрăшать. Нумай колхозсем, колхозникĕсемпе колхозницăсем государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă хыççăн çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетме Хĕрлĕ Çар фондне çĕрпĕр тонна тырă хываççĕ.

Красноармейски районри колхозсен те государство умĕнчи обязательствăсене халех парса татмалла.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

РЕСПУБЛИКАРИ МТС-СЕМ ТРАКТОРСЕМ ЮСАС ТĔЛĔШПЕ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ЯНВАРЕН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ ПУРНĂÇА КĔРТСЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА (ПРОЦЕНТПА)

МТС-сем	Капитальнăй ремонт	Текущи ремонт	Пурĕ ремонтлани
Елчĕк	75,0	86,6	82,0
Шăхасан	37,5	104,3	76,9
Канаш	88,8	60,0	70,8
Элĕк	50,0	76,1	65,7
Ишлей	73,6	58,3	65,1
Комсомольски	50,0	69,1	60,8
Куславкка	42,8	68,0	58,9
Вăрнар	61,1	55,1	57,4
Йĕпреç	60,0	52,3	54,8
Вăрмар	47,0	59,2	54,5
Чкаловски	64,2	48,0	53,8
Кувакино	50,0	55,1	53,0
Шупашкар	46,1	57,1	52,9
Çĕрпӳ	50,0	51,8	51,1
Пăрачкав	59,0	42,4	49,0
Тăвай	50,0	52,1	47,5
Красноармейски	64,7	33,3	46,3
Первомайски	28,5	46,6	45,4
Етĕрне	30,7	52,3	44,1
Хĕрлĕ Чутай	87,5	20,0	43,4
Сĕнтĕр	40,0	43,4	42,1
Шăмăршă	33,3	33,3	33,3
Улатăр	25,0	34,6	30,9
Çĕмĕрле	25,0	31,2	29,1
Сĕнтĕрвăрри	14,2	23,0	20,0
Чăваш АССР тăрăх	51,5	54,0	53,0
Январĕн 5-мĕшне пулнă	49,8	49,7	49,7

Вăйлă тырпулшăн

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха хутшăнчĕç. Макаç ялсоветĕнчи «17 партсъезд» колхоз 26 центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 17 центнер пухнă. Çак удобренисене типĕ вырăна хунă. Колхозра халĕ уя тислĕк турттарас ĕç авăн пулса пырать. Тислĕк турттарнă çĕрте колхозниксемпе пĕрлех пионерсем те хастарлăн ĕçлеççĕ. Паянхи куна колхоз уя 500 лав тислĕк кăларнă. Çавăн пекех 50 гектар çинче юр тытнă. Ольдикассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз та çуракине тĕплĕн хатĕрленет. Вырăнти удобренисене пурĕ 50 центнер пухнă, уя 580 лав торф кăларнă, 118 гектар çинче юр тытнă.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

* * *

ТĂВАЙ. (Телефонпа). Вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх пуçланнăранпа «Красная Чувашия» колхоз хире 2.000 лав тислĕк кăларчĕ. Кашни кунах 40 лаша ĕçлет. 100 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Чӳтейри «Хурçă» колхоз 2,050 лав тислĕк кăларнă, 66 центнер кĕл, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Çак колхозра П. Куракин комсомолецăн бригади уйрăмах лайăх ĕçлет. Колхоз акмалли вăрлăхсене çителĕклĕ сортласа хунă: 250 центнер сĕлĕ, 37 центнер пăрçа, 72 центнер тулă, 50 центнер пăри, 69 центнер ясмăк, 15 центнер кантăрвăрри сортланă.

ИЛЬИН.

ВЕРТЯЧИЙ ЯТЛĂ ХУТОРТА НИМĔÇСЕМ ТУНĂ ИРСĔР ĔÇСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ФОТОДОКУМЕНТСЕМ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Сталинград облаçĕнчи Вертячий ятлă хутора ирĕке кăларнă хыççăн совет тыткăна лекнĕ çыннисем валли нимĕçсем тунă лагерьте красноармеецсемпе командирсен 87 виллине тупнă. Лагерьте пулнă 89 çынран нимĕçсем 87 çынна выçăхтарса, асаплантарса тата персе вĕлернĕ.

ВЛКСМ райкомĕн пленумĕ

СОВЕТСКОЕ. Январĕн 12-мĕшĕнче ВЛКСМ райкомĕн черетлĕ II-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту сӳтсе-яврĕ: 1943 ялхуçалăх çулĕнче комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем тата çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе мĕнле туса пыни çинчен. Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Никитин юлташ доклад туса пачĕ.

Пленумра тухса калакансем комсомолăн чылай организацийĕсем 1943 çулта тухăçлă тырпул туса илессишĕн тивĕçлипе кĕрешнине паллă турĕç. Советскинчи вăтам шкулти комсомолецсем удобренисем пухас ĕçе активлăн хутшăннă. Вĕсем 5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 30 центнер кĕл пухнă. Мăн Пакăшри çамрăксем 1943 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене авăн хатĕрленеççĕ. Вĕсем 15 плуг, 2 сеялка юсаса типĕ, юр кĕмен сарайне лартнă, вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа тасатнă. Çавăн пекех Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхозри комсомолецсем те уя 3.000 лав тислĕк кăларнă, 45 гектар çинче юр тытнă. Вĕсем, государство умĕнчи тырпул памалли парăмсене татас енĕпе воскресниксем туса, пĕтĕм парăмсене декабрь уйăхĕнчех парса татнă.

Пленум çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçлекен комсомол организацийĕсене ĕçе çирĕппĕнрех тытăнма кирли çинчен астутарчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Семенова юлташ доклад турĕ.

И. ИВАНОВ.

Пионерсем тихасене шефа илчĕç

КУКЕÇ. Платкари «Красное знамя» колхозăн ферминче çамрăк тихасем нумай. Н. Лазарев, Н. Данилов, В. Шумилов, Н. Клементьев, А. Андреев тата ытти пионерсем те çамрăк тихасене шефа илчĕç. Вĕсем шкултан тухнă хыççăн кулленех тихасене тасатаççĕ, вĕсен витинче тасалăх, йĕркелĕх тăвассишĕн кĕрешеççĕ, лайăх апатлантарса пăхаççĕ.

Н. МЫШКИН.

Ют çĕршывсенче

Турци хаçачĕ гитлерла пропаганда пăркаланни çинчен çырать

СТАМБУЛ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Ени Сабах» хаçатăн редакторĕ Ялчин статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл «нимĕçсен главнăй командованийĕ мĕншĕн пĕр сăмах та каламасть, халиччен вăл питĕ нумай калаçатчĕ-çке?» тесе ыйтать. Ялчин çапла калать: «Нимĕç командованийĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри лару-тăру çинчен нимĕн те каламанни сăлтавĕ питех те паллă: гитлерла армисем совет войскисем пыра-пыра çапнипе каялла чакса пыни çинчен калама нимĕç командованийĕ хал çитереймест; унăн армийĕсем чакнине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать пулин те, вăл ун çинчен калаймасть».

Ялчин çакна кăтартса парать: Германи пропаганди нимĕç командованийĕ сăмах чĕнмесĕр тăнине ăнлантарса парас тесе темĕнле те хăтланать. «Германи информаци бюровĕн вăрçă обозревателĕ нимĕç командованийĕ пĕр сăмах чĕнмесĕр тăнине «татăклăн пырса çапма хатĕрленнипе» ăнлантарса парать,— тесе çырать Ялчин.—Ку чăнах та çапла пулсан, мĕншĕн-ха вара çар командованийĕ пытарса усранине вăрçă обозревателĕ пурне те каласа пама пултарать? Нимĕç обозревателĕ нимĕç командованийĕ чĕнмесĕр тăни «противника пăшăрхантарать» тесе калани ытлах та тĕлĕнтерет. Совет командованийĕн мĕн пăшăрханмалли пур-ха?—тет Ялчин,— вăл хăй мĕн тунине, Совет войскисем ăçта çитнине тата вĕсем мĕнле пунктсене илнине пĕлет вĕт. Нимĕçсем чĕнмесĕр тăни çакна кăтартса парать: нимĕç войскисене ытла та вăйлăн пырса çапнă, çавăнпа ун çинчен нимĕç халăхне каласа пама юрамасть. Ĕлĕкрех нимĕç командованийĕ чĕнмесĕр тăракан марччĕ, тет Ялчин. «Вăл, йăлтах урăхла, кайран пурнăçа кĕмен япаласем çинчен мăнкăмăллăн каласа паратчĕ. Мускав патне наступлени туса пынă чухне вăл: вырăс çарĕ çук ĕнтĕ, унăн юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасси çеç юлчĕ, тесе каламасчĕ-и вара? Сталинград çинчен мĕн кăна каламанччĕ? Нимĕç командованийĕ паян чĕнмесĕр тăрать пулсан—унăн каламалли нимĕн те çук пулать».

Ялчин çакна кăтартса парать: чăнлăх вăл çакăнта: нимĕç çарĕ вырăссем хĕснипе чакса пырать, вăл питех те пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕ ĕнтĕ. «Вырăссем наступлени туса пыни нимĕçсен çуллахи наступленин пур результачĕсене те шăлса тăкма пултарать. Вăрçă ĕçĕсем çав еннелле саралса пынă пек туйăнать. Нимĕçсем совет наступленийĕн çав результатне сирсе яраймĕç тесе кунран кун хытăрах шухăшлатăн. Çавăн пек условисенче нимĕç командованийĕн мĕн тумалли юлать-ха?—Пĕр чĕнмесĕр тămалли анчах юлать!» тет Ялчин.

Тунисра тĕнĕл держависен мĕн чухлĕ вăй пур

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка обозревателĕ Каирта радио тăрăх çапла каланă: Тунисра тĕнĕл держависен войскисенче 55 пин çын пур. Илнĕ хыпарсем тăрăх, унта кашни кун çĕнĕрен 500 çын пырса тăрать.

Ван Цзин-вей Англипе Америкăна хирĕç „вăрçă пуçлани" çинчен пĕлтернĕ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Ван Цзинвейĕн Нанкинри «правительстви» январĕн 9-мĕшĕнче Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах Токиопа Нанкинра çак вăрçăра Японипе Нанкин пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен çырса пĕлтернĕ.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Китайăн Лондонри официальнăй çыннисем çапла шутлаççĕ: Ван Цзин-вейĕн пуканелле правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Британи империне хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтерни Китайра Чунцинри правительствăран пуçне тата тепĕр правительство пур пек кăтартма тата тепĕр хут хăтланса пăхни çеç пулса тăрать. Тата çакна кăтартса параççĕ: Ван Цзин-вейĕн тата унăн «правительствин» Китайри территорисенчен пĕринче те нимĕнле авторитет та çук тата вĕсен нимĕнле хĕçпăшаллă вăй та çук.

Пирĕн землянсем

СЕРЖАНТ И. СОРОКИН

Çиччĕмĕш батарея тӳрĕ наводкăпа персе тăшманăн В. хулинчи огневой точкисене çĕмĕрет, фрицсене тата вĕсен блиндажĕсене кĕл пек аркатса сывлăша вĕçтерет. В. хулине йĕри-тавра çавăрса илнĕ пирĕн чаçсем тăшманăн çак хулари гарнизонне пĕтерессишĕн вăйлăн çапăçаççĕ. Питĕ хаяр çапăçу. Артиллерирен пени вĕçĕ-хĕррисĕр кĕрлесе тăрать. Юлташпа калаçнă чухне кăм мĕн калаçни илтĕнмест. Артиллери батарейисем пĕр канмасăр ĕçлеççĕ.

В. хули тăшманăн опорнăй пункчĕ. Çавăнпа та тăшман çак пункта хăй аллинчен вĕçертессишĕн мар, пирĕн наступлени тăвакан чаçсене хирĕç фашистсем час-часах контратакăсем тăваççĕ. Анчах та тăшманăн кашни контратакине пирĕн боецсем сирсе пăрахаççĕ.

Пĕррехинче çиччĕмĕш тата унпа кӳршĕллĕ батарейăсен «çимĕçсем» сехалланса çитрĕç. 1—2 сехет кая юлсан пирĕн батарея умне пысăк хăрушлăх кăларса тăрататъ. Пĕр минута тăхтамасăр боеприпассене батарейăсем патне илсе çитермелле. Анчах та кăнтăрла унта лашапа е автомашинăпа пыма май çук. Авиаци те, çĕр çинчи войскăсем те пирĕн наступлени тăвакан чаçсем çине питĕ вăйлăн персе тăраççĕ.

Иван Никитич Сорокин юлташ фронтăн малти линине хăйĕн отделенийĕпе урăх ĕçпе пынă. Дивизи командирĕн заместителĕ Сорокин юлташа артбатарейăсем патне боеприпассем васкавлăн леçсе пама приказ парать.

Сержант Сорокин пĕр вăрманта васкавлă груза тиет те çиччĕмĕш батарея патне каять. Каç сывхарать. Фронтăн малти линине çитсен:—Стой! Кто идет!—тенĕ сасă Сорокин юлташа чарать.

— Тавар тиесе килтĕм, ман таварсăр сирĕн кунта ĕç тухмасть, — тет Сорокин.

Сорокин юлташ хăйĕн колоннинчи лавсене пĕрерĕн-пĕрерĕн артбатарейăсем патне ăсатать. Кашни боец, сержант приказне пурнăçа кĕртсе, нимĕçсем валли хатĕрленĕ «куччене» срокчен леçсе парать. Темиçе минута хушши чĕнмесĕр ларнă батарейăсем тăшманăн укреплениййĕсем çине Сорокин «таварне» тăкма тытăнчĕç.

«Тавар» ăнăçлă пулнă иккен. Тăшманăн огневой точкисем пĕрин хыççăн тепри сывлăшалла сирпĕнеççĕ. Фашистсем хулан çак кĕтессинче йăлланаççĕ, кунпа пирĕн пехота пĕлсе усă курать, вăл наступление каять, хула урамĕсенчен пĕрине йышăнса илет.

— Пехотинецсен миçе фрица персе вĕлерни çинчен счет пур, манăн вăл çук, паян эпĕ илсе килнĕ «тавар» темиçе нимĕçе «çӳлти патшалăха» ячĕ пулĕ, вăрçă пĕтсен шутлăпăр, — тет сержант.

Дивизи командованинчен благодарность илнĕ хыççăн сержант Сорокин каллех хăйĕн ĕçне тытăнчĕ.

Капитан Р. ШАШКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. ÇĔНТЕРУ КУНĔ ИНÇЕ МАР

(Калинин районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсене).

Ирсĕр тăшман пирĕн вăй-хăвата, пирĕн наступленири хастарлăха хавшатма хăтланать. Анчах çакăнтан унăн нимĕн те тухмасть. Акă ĕнер те, кăштах сывлăш çавăрнă хыççăн, çĕнĕ вăйсемпе техника пухса тăратса, тăшман пирĕн çирĕплетнĕ рубежсем çине хаяррăн атакăна ывтăнчĕ. Эпир, артиллеристсем, нимĕçсем çине тăвăллă вут-çулăм тăкма тытăнтăмăр. Нумай сехет хушши пынă çапăçу хыççăн нимĕçсем çапăçу хирĕнче хăйсен çĕмĕрĕлнĕ 6 танкне тата фрицсен нумай виллисене пăрахса хăварчĕç. Çапла фашистсен атакисем пирĕн çирĕплĕх çине пырса тăрăнса аркана-аркана каяççĕ. Çакăн пек хĕрӳллĕ çапăçура пулни—вăл пысăк чыс.

Çапла эпир, фронтовиксем, тăван çĕршывăн приказне çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Сиртен, колхозниксенчен, эпир çавăн пекех тылра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, пирĕн Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах апат-çимĕç парса тăма ыйтатпăр.

Халĕ ак хĕрӳллĕ ĕç—килес çуракине хатĕрленесси пуçланчĕ. Çуракине тĕплĕн те йĕркеллĕн хатĕрленĕр, вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула туса илмешкĕн мĕн кирлине пурне те пурнăçа кĕртĕр. Эсир çакăнпа хамăрăн тăван çĕршывăн вăрçăри вăй-хăватне ӳстеретĕр, фашизма çапса аркатас куна çывхартатăр.

Пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтерес кун инçе мар. Эпир çав уява уншкăнĕпе пĕрле пухăнса уявлăпăр. Колхозниксене пурне те фронтран хĕрӳллĕ салам.

Старши политрук ШАТРОВ.

2. ТУРРЕН ТЕЛЛЕСЕ ПЕРСЕ

Кĕçĕн сержант Каширский снарядсем йăтнă. Вăл хĕрсе кайсах ĕçленĕ, оруди патне бронăйла çĕмĕрекен снарядсем, осколочнăй снарядсем запаслăх та турттарса хума тăрăшнă. Унăн çамки çине шултăра тар тухнă, анчах вăл çакăн çине çавăрăнса та пăхман. Шухăш халĕ ун çинче мар. Гитлеровецсен ӳсĕр кĕтĕвĕ, артиллерипе минометсен вутсулăмĕн хӳттипе пырса пирĕн позицисене хирĕç контратакăна кĕнĕ.

Танксене çĕмĕрекен оруди фашистсене тӳррĕнех çапма пуçларĕ. Наводчик Барсуков тĕллеве лайăх ăнсе хучĕ те, снарядсем тăшмансен пуçĕсем çинех тăкăнма, вĕсен речĕсене сайралатма тытăнчĕç.

Нимĕçсем тӳрремĕнех пырса контратака тума хăтланни ăнăçлă пулмарĕ. Нимĕç автоматчикĕсем вара оруди расчечĕ патне флангсенчен çавăрăнса пыма шут тытрĕç, анчах кунта та вĕсене оруди командирĕн Грошев юлташăн пульлисем кĕтсе илчĕç.

Каширский хăй ĕçнех тунă, вăл оруди патне фрицсем валли «кучченеç» йăтнă. Çав вăхăтра нимĕçсен танкĕсем килсе тухрĕç. Оруди командирĕ команда пачĕ:

— Бронебойными, по переднему танку, огонь!

Оруди расчечĕ татах та хастарлăнрах ĕçлеме тытăнчĕ. Снарядсенчен пĕри нимĕç танкĕн гусеницине лекрĕ те хурçă тискер кайăк чарăнса ларчĕ.

— Маттур — терĕ Грошев, Барсуков наводчика мухтаса.—Ку акă кемсемалла пулчĕ!

Анчах та нимĕçсем [illegible] килеççĕ. Сухатусене пăхмасăрах, вĕсем малалла талпăнаççĕ, оруди патне сывхарса пыраççĕ. Вара Каширский ручной пулемет илет те тăшмана пĕтерсе тăкмаллах вут тăкма тытăнать.

Çапла паттăрсем тăшманăн контратакине сирсе пăрахаççĕ. Çапла Павлов юлташăн батарейинче тата тепĕр виçĕ хăюллă боец хутшăнчĕ, вĕсем—Грошев, Барсуков тата Каширский юлташсем.

В. АЛАГЕР.

3. ИНÇЕТРИ ÇУРÇĔРТЕН — ТĂВАН РЕСПУБЛИКĂНА САЛАМ

Темиçе пин çухрăм аякран, инçетри совет çурçĕрĕнчен салам яратпăр эпир хамăрăн тăван республикăна.

Тăван çĕршывăн йывăр кунсем килнĕ вăхăтра, эпир алла хĕçпăшал тытса унăн ирĕклĕхне хӳтĕлеме тивĕç илтĕмĕр. Тăван çĕршывăн эпир хамăрăн вăйсене хĕрхенмесĕр çапăçатпăр. Çапăçу хирĕнчи пурнăç çăмăллах мар. Анчах хамăр республикăран тăван чĕлхепе çырнă çырăва вуласа тухсан, ывăнни те иртсе каять, йывăрлăхсем сирĕлнĕ пек туйăнаççĕ. Пирĕн подразделени юлашки вăхăтра 43 гитлеровеца «лаш тĕнчене» ăсатрĕ. Çакăнта пирĕн тӳпе те пур. Эпир хамăрăн çапăçури счета ӳстерсех пыратпăр. Тăван халăх шанса панине эпир тӳррĕн пурнăçа кĕртĕпĕр.

Анчах пире хамăрăн тăвансем, тăван ялсенчи колхозниксем ан манччăр. Пирĕншĕн, фронтовиксемшĕн, ытларах тăрăшччăр. Çыру çырăр, хаçатсем ярса парăр. Тăван республикăран аякра чухне тăван чĕлхепе çырнă сăмахсем питĕ паха пулса тăраççĕ.

Хĕрӳллĕ салампа:

Г. Ф. ШАРОВ, И. Е. ГОЛУБЕВ.

4. ХАМĂРĂН ÇАПĂÇУРИ ĔÇСЕНЕ ӲСТЕРСЕХ ПЫРĂПĂР

Эпир, Совет Çурçĕрне хӳтĕлекенсем, Сире, редакци коллективне, хĕрӳллĕ салам яратпăр. Тылри пурнăçра татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума пĕтĕм чун-чĕререн ырă сунатпăр. Эсир пирĕншĕн тăрăшса парнесем янăшăн Сире тав тăватпăр.

Эпир тăван республика столицинчен янă çырăва тата Сталин юлташăн чăвашла куçарнă докладне питех те пысăк кăвасланăхпа кĕтсе илтĕмĕр. Халăхсен çулпуçĕн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă докладне пысăк хавхаланупа вуласа тухрăмăр. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум Председателĕн Андреева юлташăн статьине вуласа тухса, эпир чăваш халăхĕн ывăлĕсем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă пысăк çитĕнӳсем çинчен пĕлтĕмĕр. Çакă пирĕн çапăçури хаярлăха, тăшмана курайманнине татах та ытларах ӳстерчĕ. Эпĕ, командир, тата манăн боецсем совет çурçĕрĕнчи тăван рубежсенче çирĕппĕн тăратпăр, тăшмана пĕр утăм та малалла ярса пусма памастпăр. Совет Çурçĕрĕ советсен пулнă, вăл малашне те советсеннех пулĕ. Çакăн çинчен эпир çирĕппĕн тупа туса, шантарса калатпăр.

Пирĕн кăмăл — сирĕнпе малалла та тачă çыхăну тытса тăрасси. Эпир хăвăрăн инçетри тăванăрсем патне тăван чĕлхепе çырнă хаçат-журналсем, кĕнекесем, çырусем тăтăшах çитерсе тăрассине шанатпăр. Çакă ылханлă тăшмана татах та вăйлăнрах аркатма, çĕнтерӳшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме пире пулăшать.

Краснофлотецла хĕрӳллĕ салампа:

Пĕрремĕш статьяри старшина П. БЕЛОВ, политрук Г. НИКОЛАЕВ, краснофлотецсем — М. ИЛЬИН НИКИТИН.

Наркомпросом Чувашской АССР в городе Чебоксарах организуются шестимесячные курсы по подготовке учителей английского и французского языков для V — VII классов НСШ и СШ.

На курсы принимаются лица, владеющие одним из указанных языков в об'еме средней школы, без испытаний.

Принятые на курсы обеспечиваются стипендией и квартирными.

Заявления о зачислении на курсы направлять в Наркомпрос (гор. Чебоксары, ул. Чернышевского, 5) до 25 января 1943 г.

К заявлению должны быть приложены следующие документы: автобиография и аттестат об окончании средней школы.

Занятия на курсах начнутся с 1 февраля 1943 года.

Наркомпрос ЧАССР.

2—2.

Центроэлектромонтаж в г. Чебоксарах и в г. Канаше производит набор на курсы электромонтеров по внутреннему электромонтажу фабрично-заводских предприятий и линий электропередачи.

Обучение теории и практике производится непосредственно на производстве.

Лица, принятые на курсы, обеспечиваются стипендией в 150—200 руб., общежитием, питанием в столовой и рабочей карточкой.

С заявлениями обращаться:

г. Чебоксары, ул Ленина, дом № 1, «Центроэлектромонтаж».

г. Канаш, Текстильная фабрика, начальнику участка «Центроэлектромонтажа».

2—2.

Требуются: бухгалтер-инвентаризатор, ст. бухгалтер сельского хозяйства, бухгалтера столовых на самостоятельный баланс, агрономы-директора подсобных хозяйств Военторга и сторо[illegible]

В связи с окончанием бюджетного года, Чувашпромкасса просит промыслители представить расчетные ведомости по страховым начислениям за декабрь м-ц 1942 года и не позднее 25 января 1943 года произвести выверку взаимных расчетов за 1942 год.

После указанного срока никакие претензии приниматься не будут

ЧУВАШПРОМКАССА.

2—1.

ОРС'У завода требуются: экономисты (по планированию и для работы в карточном бюро), продавцы, экспедиторы; работники в сапожную мастерскую: сапожники, заливщики галош и ученики; работники в столовые: работницы для переборки овощей, сторожа, плотники, повара и др.

Обращаться: Ул. Карла Маркса, 8, Бюро кредитов, от 11 до 4 часов дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1212 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 34 п.